Шупашкар район хаҫачӗ ❋ 1932 ҫулхи июлӗн 27-мӗшӗнче тухма пуҫланӑ

# ТӐВАН ЕН

43 (9033) № ❋ 2005 ҫулхи апрелӗн (ака уйӑхӗн) 20-мӗшӗ. Юн кун ❋ Хакӗ ирӗклӗ

❋ Ҫур аки умӗн

## ИР ВӐРАННӐ - ТУТӐ ПУЛНӐ

**Апрелӗн 14-мӗшӗнче районти организацисемпе предприятисенче, ял хуҫалӑх кооперативӗсенче ӗҫлекен водительсемпе специалисчӗсен пухӑвӗнче гостехнадзорӑн тӗп инженерӗ В.С.Михайлов районти уй-хир ӗҫне тухакан тракторсен вӑтам ӗмӗрӗ 14 ҫул ҫурӑ пулнине пӗлтерчӗ.**

Анчах та кустӑрмаллӑ тракторсен, амортизаци ӗмӗрӗ 10, гусеницӑллисен 9 ҫул пулнине шута илсен паян хуҫалӑхсенче усӑ курма вӑхӑчӗ иртмен тракторсене пӳрнепех шутласа кӑларма пулать ӗнтӗ.

- Хуҫалӑхсенче техника тӗрӗслевӗпе икшер хут та пултӑмӑр,- тет гостехнадзорӑн тӗп инженерӗ В.С.Михайлов. - Вӗсенче шутланса тӑракан 497 трактортан 104-шне кӑтартнӑ, вӗсенчен 94-шӗ хире тухма хатӗррине палӑртнӑ, ку пур трактортан 19 процентӗ ӗҫе хатӗррине пӗлтерет.

**Апрелӗн 15-мӗшӗнче** Валериан Семенович ертсе пыракан комисси тӑватӑ хуҫалӑхра пулчӗ. «ЧувашАгроМаркетра» тӗрӗслеве пилӗк трактор тӑратнӑ. Тӑватӑ техники юсавлӑ пулчӗ. Теприн ҫинче хуҫи е тракторист ҫук, ҫавӑнпа та электрооборудованине юсаса ҫитерейми. Кунта Кӳкеҫри 27-мӗш профессии училищинчен кӑҫал вӗренсе тухакан 11 ҫамрӑк практикӑна килчӗ. Вӗсем те ака-суха агрегачӗсене тӗрӗслеҫҫӗ, кивелнӗ чаҫӗсене улӑштараҫҫӗ. Вӗсене ӗҫре А.А.Гаврилов ертсе пырать. Хуҫалӑхӑн тӗп агрономӗ Г.И.Сидоров каланӑ тӑрӑх, вӑрлӑх хатӗрлесси те вӗҫленсе пырать. Пӑрҫана вӗсем нимӗҫ пӑрҫипе улӑштарнӑ. Белок енчен пӗр шайрах вӗсем. Паянхи кун хуҫалӑхра хире тухма пултаракан 13 трактор пулсан, тӑваттӑшӗ хатӗр терӗмӗр, ыттисемпе ӗҫлеҫҫӗ-ха.

**Тутаркассисене** те ҫӑмӑл теме ҫук халӗ. Паркра ӗҫ шавӗ тӑрать. 48 трактора ӗҫе хатӗрлемелле вӗсен, тунти кун тӗлне 12 тухнӑ. 1982-1983 ҫулсенче кӑларнӑ тракторсем те пур паркра. В.В.Васильев механизаторта виҫҫӗмӗш ҫул ӗҫлет. Унӑн тракторӗ те ҫамрӑк мар. 1986 ҫулта «ҫуралнӑ», чиперех чупать, хӗлле - фермӑра, ҫуркунне, ҫулла хирте ытларах ӗҫлеме тивет.

- Двигательне юсанӑ, чиперех ӗҫлет, кабинине улӑштармалла та,- тет Валерий Валерьевич.



Г.СЕМЕНОВ фото ӳкерчӗкӗ.

Ҫакӑн пек ӗҫченсем ҫине пӑхатӑн та тӗлӗнетӗн. Вӗсем хӑйсем мӗнле пысӑк ӗҫ тунине пур чухне те ӑнланса та илеймеҫҫӗ пулӗ. Тӑван хуҫалӑхшӑн, ҫӗршывшӑн мӗн тери пысӑк ӗҫ тӑваҫҫӗ. Ҫур аки кӗтменнине лайӑх ӑнланаҫҫӗ.

Тӗрӗслевре тепӗр трактор. Пурте йӗркеллех, анчах та пӗр енчи фара ҫунмасть. Аптӑранӑ кӑвакал кутӑн чӑмнӑ тенӗн трактористчӗ ӑна чӑмӑрӗпе ҫапса пӑхать. «Алӑ ҫитеймерӗ-ха, халех тӗрӗслетӗп»,- тет.

Тӗп инженер В.Д.Ефимов хуҫалӑхра ҫӗнӗ ҫын пулсан та ку ӗҫре самай ӗҫленӗ, опыт пур.

- Пирӗн тӗп инкексем вӗсем - эрех ӗҫме пӗлменнипе кукӑр алӑллӑ ҫынсем пулни, - тет Владимир Дмитриевич.

**Шемшерсен** вара лару-тӑру тата йывӑртарах. Халӗ кунта пӗтӗм техникӑран гусеницӑллӑ икӗ трактор ҫеҫ стартра тӑрать.

- Пирӗн чи пысӑк чӑрмав вӑл - механизаторсем ҫитменни,- тет председатель ҫумӗ, вӑлах техника енӗпе яваплӑ специалисчӗ Н.А. Павлов.

- Ӗҫлекен ҫынна пушӑпа хӑвалама кирлӗ мар, вӑл хӑех ӗҫ майне тупса куҫ хӑранине ҫӗнтерме пултарать. Кахалланакана вара нимӗнле те тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫлеттереймӗн,- тет комисси членӗ, ӳсен-тӑрансене хӳтӗлес енӗпе ӗҫлекен районти станци пуҫлӑхӗ И.В.Дмитриев.

**Ленин ячӗллӗ** ял хуҫалӑх кооперативӗнче ҫут ҫанталӑк ҫутӑрах. Вӗсем 26 трактортан 19-шне юсаса ҫитерме пултарнӑ.

- Нумай техникӑн огнетушительсем ҫук,- тет Валериан Семенович, - ҫак эрнере халӗ питӗ активлӑ ӗҫлемелле. Юр кайса пӗтрӗ, ҫӗр типме пуҫлать.

Ир вӑраннӑ кайӑк тутӑ пулнӑ теҫҫӗ те, чӑннипех те ҫаплах пулӗ ҫав.

**П.ПАВЛОВ.**

**❋ «ЧувашАгроМаркет» хуҫалӑхӑн техника паркӗнче 27-мӗш училищӗре вӗренекенсем культиватор юсаҫҫӗ.**

## САЛАМЛАТПӐР

Районти потребкоопераци системинче нумай ҫул тухӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн **«Радуга» ООО пекарьне Татьяна Васильевна КУЗНЕЦОВАНА район администрацийӗн Хисеп грамотипе** наградӑланӑ.

Районта халӑх творчествине аталантарассишӗн пысӑк тӳпе хывнӑшӑн тата нумай ҫул тӳрӗ кӑмӑлпа ӗҫленӗшӗн **Кӳкеҫри куҫса ҫӳрекен клуб учрежденийӗн методистне Ирина Ивановна НИКОЛАЕВАНА,** библиотека ӗҫӗнче нумай ҫул тухӑҫлӑ ӗҫленӗшӗн **районти тӗп библиотекӑн директор ҫумне Галина Львовна ТИМОФЕЕВАНА район администрацийӗн Хисеп грамотипе** наградӑланӑ.

## КОНСТИТУЦИЕ УЛШӐНУСЕМ КӖРТНӖ

Малтанхи пекех пулас-тӑк, кӑҫал Чӑваш Ен Президентне ҫӗнӗрен суйламаллаччӗ. Анчах ку суйлав пулмасть. Сӑлтавӗ паллӑ: регионсен влаҫне ҫӗнӗлле йӗркелемелли ҫинчен саккун йышӑннӑранпа президентсемпе кӗпӗрнаттӑрсене РФ Президенчӗ сӗннипе регион парламенчӗ ҫирӗплетет. Ҫавӑнпа та вӗсене халь халӑх тӳрреммӗн суйламасть.

ЧР Патшалӑх Канашӗ хӑйӗн нумай пулмасть иртнӗ 24-мӗш сессийӗнче шӑпах ҫак ыйтӑва пӑхса тухнӑ, Чӑваш Ен Конституцине тивӗҫлӗ улшӑну кӗртнӗ.

Унсӑр пуҫне республика депутачӗсем 2005 ҫулхи бюджет саккунне ҫӗнетнӗ. Унӑн тупӑш пайне 644,7 миллион, расхут пайне 768,8 миллион тенкӗлӗх ӳстернӗ. Дефицитне трансферт тата пулас ӳсӗм шутӗнчен саплаштарма палӑртнӑ.

Расхутне ӑҫта яма палӑртаҫҫӗ-ха? Раҫҫей шайӗнчен профтехучилищӗсем регионсен шайне «перҫе аннӑ». Вӗсене ҫав шайрах тытса тӑмалла. Унсӑр пуҫне сентябрӗн 1-мӗшӗнчен республикӑри бюджетниксен шалӑвне тата кӑштах ӳстерме палӑртнӑ. Апрелӗн 1-мӗшӗнчен ача укҫи ӳснӗ. Виҫҫӗмӗшӗнчен республикӑн тӗллевлӗ программисене пурнӑҫа кӗртмелле. Ҫав шутран, ҫамрӑк ҫемьесене пулӑшасси, яла управлени кадрӗсем явӑҫтарасси, инновациллӗ проектсем т.ыт.те.

Сесси ӗҫне Н.В.Федоров Президент хӑй те хутшӑннӑ.

**В.ТРОФИМОВ.**

**ХИСЕПЛӖ ВУЛАКАНСЕМ!**

**2005 ҫулхи иккӗмӗш ҫур ҫул валли «Тӑван Ен» хаҫат ҫырӑнтарӑвӗ малалла пырать. Ӑна почтальонкӑсем те, почта уйрӑмӗсенче те, унсӑр пуҫне альтернативлӑ майпа хаҫат редакцийӗнче те ҫырӑнтараҫҫӗ. Хапӑл тӑватпӑр «Тӑван Ен» тусӗсен йышне!**

## НИКОЛАЕВА АСӐНСА - ЧУПУ

Апрелӗн 16-мӗшӗнче Кӳкеҫ-Шуршӑл маршрутпа шкулсем хушшинче ҫӑмӑл атлетсен чупӑвӗ пулчӗ. Эстафета патакки пӗр шкултан тепӗр шкула куҫиччен чупӑва хутшӑнакансене район администрацийӗн вӗрентӳ управленийӗн начальникӗ Г.Николаев саламларӗ. Герман Васильевич А.Г.Николаев космонавтӑн пурнӑҫӗ, ҫӗршыв умӗнчи тава тивӗҫлӗ ӗҫӗсем ҫинчен каларӗ. Тӗп хуларан килнӗ спорт ветеранӗ, Ю.Плотников комментатор ҫӑмӑл атлетсене старт пачӗ.

Кӳкеҫри 1-мӗш номерлӗ шкул, лицей, шкул-интернат, Вӑрман-Ҫӗктер, Тренккасси, Тутаркасси шкулӗсен спортсменӗсем палӑртнӑ вырӑна ҫитсен чӑваш халӑхӗн мухтавлӑ ывӑлӗн вил тӑпри ҫине чечексем хучӗҫ, музейпа паллашрӗҫ. Чупӑва хутшӑнакансем Сӗнтӗрвӑрри районӗн Шуршӑл ял администрацийӗн ӗҫченӗсене тав сӑмахӗ каласа ҫӗклентӳллӗ кӑмӑлпа килӗсене таврӑнчӗҫ.

**А.СУСМЕТ.**

❋ Ҫуркунне

## *ТАВРАЛӐХ ТАСАЛӐХӖ САНРАН ТА, МАНРАН ТА КИЛЕТ*

**Ӗҫе кайнӑ май кашни ирех тӑван тавралӑх илемӗпе чунтан киленсе утаттӑм. Ҫапла. Паян вара юр ирӗлсе пӗтнӗ те хӑш-пӗр ҫӗртен пуҫа айккинелле пӑрса иртрӗм. Мӗн кӑна выртмасть-ши? Канихвет-мороженӑй хучӗ те, сигарет тӗпӗ те, пуш кӗленче те - пурте пур. Вӑрманпа ирсерен ӗҫе килнӗ май Кӳкеҫ пасарӗ патне тухатӑп. Ыйхӑран вӑрана пуҫланӑ йывӑҫсемпе сывпуллашнӑ вырӑнтан паян мулкач пек сиккелесе иртрӗм. Ҫурхи шывпа темте пӗр юхать...**

**Кӳкеҫ** урамӗсене сӑнаса юриех ҫаврӑнтӑм. Пур ҫӗре те ҫитмерӗм-ха. Халӑх уйрӑмах йышлӑ ҫӳрекен Советски, Сӗнтӗрвӑрри, Карл Маркс, Шоссейнӑй... Советски урамра хӑраса каймалла тулса ларнӑ таса мар вырӑнсенех ас тумарӑм. Карл Маркс урамӗнче хӑшӗсем хӑйсен умӗсене пуҫтарнӑ, теприсен ал ҫитеймен, е, тен, хӗвеле кутӑн ҫуртсен умӗнче типсе ҫитейменнипе те тытман пуль... Ҫапах та хӑш-пӗр вырӑнсем пирки уйрӑммӑнах асӑнма тивет. Чи таса мар вырӑнсем - обществӑлла чарӑну лаптӑкӗсем. Шоссейнӑй урамрине илер-и е Сӗнтӗрвӑрри урамӗнчи вӗрентӳпе курс комбиначӗ тӗлӗнчи остановкӑна пӑхар-и - пӗр пекех теме юрать. Ҫӳп-ҫап урни пулсан та темшӗн-ҫке унта пӑрахасшӑн мар этем хӑйӗн аллинчи пуш сӑра кӗленчипе мороженӑй хутне... Урнӑсене пур чухне те вӑхӑтра пушатманнипе те тулать-тӗр хӑш чухне.

**Тасамарлӑх** хӑйне хуҫа евӗр туякан тепӗр вырӑн вӑл - ҫӳп-ҫап контейнерӗсем патӗнче. Йӑлари хыт каяшсене тӑкмалли ятарлӑ вырӑн пулсан та патне пыма ӳркенеҫҫӗ теприсем. Ун пек лайӑх тӗслӗх-Росгосстрах тата ытти организацисем вырнаҫнӑ ҫурт хыҫӗнчи пурӑнмалли ҫуртсен умӗнчи лаптӑк. Сарайсем те пур. Икӗ контейнер пуш-пушӑ ларать. Юнашар вара - такам та ура хуҫмалла ҫӳп-ҫап. «Хӗл каҫипе пуҫтарӑннӑ пуль»,- хурав шыратӑп ӑшӑмра. «Контейнер тулнӑ-тӑр, ирӗксӗрех айккине тӑкӑннӑ»,- сӳтӗлет шухӑш ҫӑмхи. Анчах айккинелле пӑхатӑп та, контейнерсенчен пӗр 6-7 утӑмра тата тепӗр купа тес купа мар, ҫӳп-ҫап сапаланса выртать...

**Советски** урамра вырнаҫнӑ «Елена» киоск патӗнче те контейнер. Ун тавралла та - тасамарлӑх. Ҫывӑхри ача-пӑча площадкинче те тирпейсӗрлӗх хуҫаланать. Райцентрти «Гранд» магазин тӗлӗнчен Карл Маркс урамне пӑрӑнса аннӑ ҫӗрте сулахай енче юлакан ҫурт айккинче те ҫӳп-ҫап выртать. Утса иртекен явапсӑр пӗр ҫын канихвет хучӗ пӑрахса хӑварнипе пуҫтарӑнман вӑл. Пӗр витре тӑкнипе те мар.

Пуҫтармалла, тасатмалла, тирпейлемелле. Анчах тепӗр чух мана кӑна кирлӗ-им тесе калас килни те пулать пуль. Ӗненетӗр-и е ҫук-и, анчах хӗл каҫипе эпӗ урам варрине пӗр хут татӑкӗ те пулин вӑркӑнтарса хӑварман. Ытах пӑрахмалли пулсан, сумкӑна чикнӗ те килти ҫӳп-ҫап витрине кӑларса пенӗ. Ачама та ҫавӑн пек вӗрентнӗ. Ҫапах пӗр япала аса килчӗ. Пӗр пиллӗксенчеччӗ пуль вӑл ун чухне. Мороженӑй ҫисе пӗтернӗ хыҫҫӑн хутне «Самолет вӑл» тесе ҫилпе вӗҫтерсе ячӗ. «Ма петӗн? Ил»,- тесен, чупса кайса тытрӗ хайхи хута. Шарламасӑр кӗсйине чикрӗ. Кӑшт утсан хайхи: «Мӗншӗн пӑрахма юрамасть? Ҫынсем ҫавах переҫҫӗ-иҫ»,- тесе хучӗ. «Пулин,- терӗм пепкеме. - Пӗр ҫын пемесен те сахалланать».

Маншӑн пулсан ик айкки те тӑвайкки текенсене ӑнланмастӑп. Автобус чарӑнӑвӗнче тӑратӑп. Пӑхма чипер пикех, хӗвел ҫаврӑнӑш кӑшласа тӑрать. Лачӑк! сурать хуппине ҫӗре. Урам шӑлаканнине чӑрмантарасшӑн мар-ха хӑй тата: пӑрӑнать. Тӳсеймерӗм, сумккари полиэтилен хутаҫа кӑларса хӗре сӗнтӗм. Малтанах ӑнланмарӗ курӑнать, кайран хӗвел ҫаврӑнӑш хуппине сурма чарӑнчӗ.

**Тавралӑх** илемлӗ пуласси хамӑртан килет. Апла, атьӑр-ха пурте пӗр шухӑшлӑ пулар та перес тенӗ япалана урна патне ҫитиччен алӑра тытса утар. Кашниех ҫавӑн пек тусан тавралӑх ҫуталса кайӗ. Тупӑшатпӑр-и? Е шикленетӗр-и? Ҫапла ҫав...

**В.ЭВЕРККИ.**



В.ИВАНОВА фото ӳкерчӗкӗ.

**❋ Райцентра «сӑн-сӑпат» кӗртекен ӳкерчӗксенчен пӗри.**

# ЭЛЕКТРОЭНЕРГИЕ НУМАЙ ВĂРЛАÇÇĔ

## АНЧАХ ÇАКНА ХИРĔÇ ÇИРĔП МЕРĂСЕМ ЙЫШĂНАÇÇĔ

**Электроэнерги вăрласси чăннипех хăрушă шая çĕкленнине пĕлтереççĕ республикăра. Паян вăл энергетиксем умне кăна мар, пĕтĕм обществăшăн пысăк хăрушлăх кăларса тăратать. Ку тĕлĕшпе пирĕн тăрăхри лару-тăрупа Çурçĕр электросечĕсен районти пуçлăхĕ А.П.ЛАЗАРЕВ паллаштарать.**

- Электроэнергие йĕркене (саккуна та!) пăхса вăрланă тĕслĕхсем, шел те, сахал мар. Сĕмсĕрсем счетчиксене ĕçлеттермесĕр йăла техникине хута яраççĕ, çурчĕсене ăшăтаççĕ, сварка ĕçĕсем иртттереççĕ тата ытти те. Иртнĕ çул районта потребительсен валли уйăрса панă электроэнергин 26 процентĕ пачах шута кĕмен. Хуравĕ паллă: вăрланă,- тет Александр Павлович.

**- Йĕркесĕрлĕхе хирĕç епле кĕрешетĕр?**

- Улталакансене тупса палăртас енĕпе рейдсем, планпа палăртнă тĕрĕслевсем иртттеретпĕр. Акă кăçалхи виçĕ уйăхра пирĕн ĕçченсем Кайри Шăнкас, Йăршу, Туçикасси, Етĕрнекасси, Мăн Чăкăр, Чăрăшкасси, Шорчекасси, Матикасси, Чаканар, Шăпачав ялĕсенче рейдсем иртттернĕ. Йĕркене пăсакансем пирки çийĕнчех электричество энергийĕпе усă курмалли правилăсене пăсни çинчен акт çырнă. Асăннă ялсенчен кашнинчех 2-3 кил хуçисем çине акт çырма тивнĕ. Штраф вăтамран 3-4 пин тенкĕпе танлашать.

Рейдсем усă параççĕ пулсан та хальлĕхе ку çителĕксĕр. Январĕн 1-мĕшĕнчен «Чăвашэнерго» АУО тăватă пая пайланчĕ. «Чăваш Енри электрогенераци компани» АУО, «Чăваш Енри энергие тивĕçтерекен компани» АУО, «Шупашкар ГЭСĕ» АУО, «Чăваш Енри ертсе пыракан компани» АУО. Халĕ вĕсем хăйсем тĕллĕн ĕçлекен организацисем шутланаççĕ. Унсăр пуçне «Чăвашэнерго» АУО хăй уйрăм - энерги валеçекен сетьсен компанийĕ. Çак улшăнусен тĕп тĕллевĕ - пурлăхпа техника никĕсне тĕреклетесси. Реорганизаци пулнă май пирĕн ĕçлес йĕрке çĕнелчĕ, çирĕпленчĕ. Халăха витĕмлĕрех чĕлхепе ăнлантарсан вăл çапларах: пире, электросетьсене, энергие потребитель патне пĕр тăкаксăр (гражданосем электроэнергипе усă курнăшăн хывакан укçа пĕтĕмĕшле электроэнергин тăкакĕпе килĕшсе тăрать) илсе çитересси. Мĕн çухални - пирĕнтен шыранса илĕнет. Çавăнпа та халăхпа тачăрах, тухăçлăрах ĕçлес тĕллевпе предприятисемпе, хуçалăхсемпе тата уйрăм çынсемпе килĕшÿсем тăватпăр. Хальлĕхе ăна районĕпе 38 процент çеç тунă. Асăннă килĕшÿсем укçа-тенкĕ ыйтăвĕсене вăхăтра татса пама, электроэнергие усăсăр тăккаласинчен витĕмлĕхе ÿстерме май парĕ.

Вăрланă киловатт-сехетсен хакне укçа-тенкĕ çине кусарсан чăннипех пысăк сумма пухăнать. Çакă Чăваш Енре энергипе усă куракансене кал-кал та шанчăклăн энергипе тивĕçтерсе тăрассине пурнăçлама станцисем валли топливо, технологи оборудованийĕ, саппас пайсемпе юсав ĕçĕсем иртттерме каймалли укçа-çке. Ытларах вăрлатăн - çавăн чухлĕ сиен кÿретĕн: потребительсем энергишĕн тÿлекен укçасăр пуçне энергосистемăн урăх тупăш çук. Çитменнине, кукăр алăллисене пула тÿрĕ чунлисен нуша курма тивет.

Электроэнергишĕн укçа-тенкĕ вăхăтра куçарса пыманнисен йышĕ чакманни те пăшăрхантарать пире. Çулталăк пуçланнăранпа 22 процент çеç тÿленĕ.

**- Энерги вăррисене саккунпа килĕшÿллĕн мĕнле санкцисем кĕтеççĕ?**

- Пысăк штраф, кил-хуçалăха электроэнерги парса тăма чарнисĕр пуçне уголовлăй ĕç пуçарса суда ярса паратпăр. Явапláх çирĕп: пилĕк çул таран ирĕклĕхсĕр хăварма пултараççĕ. Пĕлтĕр, сăмахран, республикăра хĕрĕхе яхăн уголовлăй ĕç пуçарнă, вĕсене (телее, пирĕн районтисем «çакланман») тивĕçлипе явап тыттарнă. Çурçĕр электросечĕн Шупашкар районĕнчи ĕçченĕсем талăкĕпех хăйсен балансĕ çинчи электричество сечĕн хуçалăхĕсенче пулаççĕ, вырăнта мĕн пулса иртнине сăнасах тăраççĕ: техника кăлтăкĕ пур-и, ирĕк памасăр кам та пулин линипе çыхăннă-и... Юлашкинчен çакна каласа хăварасшăн: ĕнер, паян лекменнишĕн ан савăнăр, ыран та кун пур, ун чухне ÿкĕнÿ хака ларĕ. Çакна ас тăвăр.

**И.ВАСИЛЬЕВА.**

# ТУТАРКАССИСЕМ - ПĔРРЕМĔШ

Апрелĕн 12-мĕшĕнче Шуршăлта Республикăра пĕрремĕш хут «Çамрăк космонавтсем» отрядсен слечĕ иртрĕ. Слет умĕн космонавтсен кунне халалланă митинг пулчĕ. Унта Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В.Федоров та хутшăнчĕ. Çак мероприятие Тутаркасси шкулĕнче вĕренекенсем те хутшăнчĕç.



Тĕрлĕ ăмăртусем иртрĕç. Пирĕн шкул отрячĕ ăмăртура 1-мĕш вырăн йышăнма пултарчĕ. Юрă конкурсĕнче Марина Тюрковапа Ольга Исакова III-мĕш вырăн йышăнчĕç. «Литература» секцийĕнчи ăмăртура Александр Черемухин, Александр Михайлов, Ирина Якимова хăйсен пултарулăхне кăтартрĕç, 1-мĕш вырăна тивĕçрĕç. Спорт енĕпе ăмăртса Павел Алексеев, Александр Сучков, Владимир Иванов палăрчĕç - каллех 1-мĕш вырăн. Маттур ачасем икĕ диплом илме тивĕçрĕç. Хаклă парнесемпе чысларĕç вĕсене. Ачасем калана тăрăх, слетра чи паллă самант, - Президентпа тĕл пулни. Çак слет кашни çулах иртессе шанатпăр. Тепĕр çул та хутшăнăпăр. Çĕнтерÿçĕсене саламлатпăр, вĕсемпе мухтанатпăр. Çĕнтерÿçĕ отряда ертсе пыраканĕсене, ачасене хатĕрлекенĕсене: В.В.Семеновăна (организатор), Р.В.Игнатьевăна (вожатăй), Г.И.Мустаевана (вожатăй) чунтан тав тăватпăр. Командăна дипломсемпе чысланă май Н.В.Федоров кашни ачана хăй парнесем пачĕ, пĕр фото ÿкерĕнчĕ.

**К.ТОЛСТОВА,**
**Тутаркассинчи шкул, «Çамрăк журналист» кружок членĕ.**
**✵ Н.В.Федоров çĕнтерÿçĕ командăпа.**

✵ Ачасен пултарулăхĕ

### ÇУРКУННЕ

*Тÿпе сенкер, таса,*
*Пат-пат! тумла тумлать,*
*Çуркуннене савса*
*Чĕрем кăлт-кăлт! тапать.*

***М.ЛЕПЕШКИН,***
***Атайкасси шкулĕ.***

### ЯЛТИ КАНУ КАÇĔ

Апашри клуб-музей çамрăксен кану каçне тĕрлĕ енлĕ иртттерме тăрăшать. Акă иртнĕ кунсенче çеç «Ăнлан мана» («Пойми меня») канупа ташă каçĕ иртрĕ. Кун пек мероприятисем çамрăксене килĕшни аван курăнать. Ташă каçĕсем валли ятарлă программа хатĕрлетпĕр. Программăна тавракурăма ÿстерес, вăй-хала тĕрĕслес енĕпе конкурс, ыйту кĕртетпĕр. Пултаруллисене парне парса хавхалантаратпăр. Хальхинче акă, хамăр ял хĕрĕпе Лия Ивлевăпа (вăл студентка) 10 хĕр хăнана килнĕ. Вĕсем те пирĕн ташă каçне килчĕç. «Хулара та кун пек савăнăçлă, усăллă кану каçĕсене сайра тĕл пулатăн»,- терĕç вĕсем.

Конкурссем хушшинче тăтăшах саламлă юрăсем, ташăсем иртеççĕ. Хальхинче Ангелина Бородована юрри янрарĕ. Сăмах май, Ангелинăн репертуарĕ çулсеренех çĕнелсе пырать.

Катя Ерилеева та Ангелинăран юласшăн мар. Вĕренет çеç пулин те тĕрлĕ инструмент çинче каласа юрлама пултарать. Уйрăмах гитарăпа выляса «Малыш не плачь» юрлани куракансен кăмăлне каять.

**Л.ЭЙВАЗОВА,**
**Апаш ялĕ.**

✵ Аслă Çĕнтерĕве кĕтсе илетпĕр

# ПУЛТАРУЛĂХ КĂТАРТРĔÇ

Салапайкассинчи пĕтĕмĕшле пĕлÿ паракан шкулта Аслă Çĕнтерĕве халалласа - 1-9-мĕш классем хушшинче спорт ăмăртăвĕсем иртттертĕмĕр. Пĕр уйăха тăсăлнă ăмăртусене ачасем хастар хутшăнчĕç, никам та аиккинче тăрса юлмарĕ. Ачасем класпа класс, звенопа звено, ялпа ял ăмăртрĕç, тупăшрĕç, кĕрешрĕç. Кунран кун вăйăсем хĕрсе пынăçемĕн ачасен интересĕ те, кăтартăвĕсем те лайăхланса пычĕç.

Чи малтанах çамрăк йĕлтĕрçĕсен эстафети иртрĕ. Кунта 2-4-мĕш классем хушшинче пĕрремĕш вырăна Ирина Смирнова çĕнсе илчĕ. Иккĕмĕш вырăна Анастасия Вастрейкина, виççĕмĕш вырăна Надежда Бронюшкина тухрĕç. Вĕсем пурте 3-мĕш класра вĕренеççĕ. Арçын ачасенчен вара Игорь Барабаш, Артем Петров (4-мĕш класра вĕренеççĕ), Роман Семенов çĕнтерчĕç.

5-9-мĕш классем хушшинче хăвăрт чупассипе пĕрремĕш 8-мĕш класра вĕренекен Ирина Ефремова тухрĕ. Иккĕмĕш - Ирина Бронюшкина. Пиллĕкмĕш класра вĕренекенсер спортра кăна мар, вĕренÿре те пысăк ÿсĕмсем кăтартать. Унăн пур предметпа та «5» паллă çеç. Виççĕмĕш вырăна 8-мĕш класра вĕренекен Татьяна Рябкова тивĕçрĕ.

Каччăсенчен финиша пĕрремĕш çитекенĕ Евгений Моисеев пулчĕ, 8-мĕш класра вĕренет. Иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене Моисеев тата Матвеев Денисcем пайларĕç.

Мăшăррăн чупакан çамрăк йĕлтĕрçĕсем çине пăхса-сăнаса тăмашкăн та питĕ интереслĕ пулчĕ. Кунта пĕрремĕш вырăна Руслан Гайков тата Оля Матвеева тухрĕç. Иккĕмĕш пĕр çемьери йĕкĕрешсем - Оля тата Олег Спиридоновсем çитрĕç. Вĕсенчен пĕрин йĕлтĕр туйи хуçăлман пулсан пĕрремĕш тухатчĕçех те пулĕ. Виççĕмĕш вырăна Оля Волковапа Александр Долгов çĕнсе илчĕç.

Шкулти ачасен чи юратнă вăййи вăл - футбол. Ку ăмăрту Салапайкассипе Ункăпуç ялĕсем хушшинче иртрĕ. Ункăпуççем çĕнтерчĕç.

Пĕтĕм ĕçе йĕркелесе пыраканĕ шкул директорĕ, физкультура учителĕ Алексей Павлович Директоров пулчĕ.

**А.МАТЮШКИНА,**
**Салапайкасси шкулĕ.**

✵ Политика

# ЭЛĔКРЕ ЛАРУ-ТĂРУ ЙЫВĂРЛАНАТЬ

Иртнĕ эрнере Н.В.Федоров Президент ЧР Патшалăх Канашне Элĕк районĕнчен суйланнă депутата, Элĕк районĕн тĕп больницин тĕп врачне А.И.Платонова хăй тата район депутачĕсен пухăвĕ ыйтнипе йышăннă.

Районта тÿлекен ĕç укçи республикăра чи пĕчĕкки шутланать, юлашки виçĕ çул хушшинче налук парăмĕ Элĕк районĕнче 6,5 миллионран 21 миллион тенке çитнĕ, сысна самăртакан комплекс тата сĕт завочĕ хупăннă, ял хуçалăх продукцийĕ илесси çулсеренех чакса пырать, район администрацийĕ тытса тăрайманнипе социаллă хÿтлĕх паракан уйрăмра темиçе специалиста чакарма тивнĕ тата ытти те. Çав вăхăтрах район администрацийĕн пуçлăхĕ вырăнти депутатсемпе вăрçăнса ларать-мĕн. Депутат Президента лару-тăрăва улăштармашкăн пулăшмашкăн ыйтнă.

Н.В.Федоров тĕл пулу хыççăн ЧР Министрсен Кабинетне Элĕк районĕнчи лару-тăрăва лайăхлатмалли мерăсем йышăнма хушнă.

**В.ТРОФИМОВ.**

# ВРАЧА АЛĂРАН ЯРСА ТЫТНĂ

Çăмăллăхсем теприсен пуçне çавăрса яраççĕ пулас. Акă, Красноармейски районĕнче çак кунсенче суд райбольницăн врач-фтизиатрĕн ĕçне пăхса тухса унран 12 пин ытла тытса юлмалла тунă тата виçĕ уйăх ĕç укçи чухлĕ ăна штраф панă.

Вăл хăйĕн ĕç вырăнĕпе усă курса эмелсем, çăмăллăхпа усă куракансем валли тесе, укçасăр çыртарнă. Пурĕ 78 рецепт 12197 тенкĕлĕх илнĕ. Тĕрĕслев вара хăйĕнсĕр пуçне ку эмелсемпе урăх никам та усă курманнине кăтартса панă.

**В.ВАСИЛЬЕВ.**

✵ Аслă Çĕнтерÿ 60 çул тултарас умĕн

# ÇЫХĂНĂВА ЙĔРКЕЛЕСЕХ ТĂТĂМĂР

Кăрмăш ялĕнче çуралса ÿснĕ Таисия Федоровна Шорина Кăшавăшри çичĕ çул пĕлÿ паракан шкултан вĕренсе тухсан Ишлейри çыхăну уйрăмĕнче телеграфисткăра ĕçлеме тытăннă. 1943 çулхи мартăн 11-мĕшĕнче вара вăл та ытти çамрăк хĕрсемпе пĕрле Хĕрлĕ Çара тухса каять.

Хĕрсене Мускав çывăхĕнчи Кратово станцине ăсатаççĕ. Çакăнта пуçланать те унăн салтак пурнăçĕ. Кунта вĕсене стройпа утма, хĕç-пăшалпа усă курма хăнăхтараççĕ. Çамрăк салтакăн курсне пĕтернĕ хыççăн Смоленск çывăхĕнчи 412-мĕш уйрăм çыхăну батальонне яраççĕ. Кунта салтак-хĕрсене телефонпа ĕçлеме, Морзе азбукине вĕрентеççĕ.



- Вун виçĕ хĕрчĕ эпир, - çав вăхăтсем пирки каласа парать Таисия Федоровна. - Вĕреннĕ вăхăтра санинструкторсен ĕçне хушрĕç. Калама та аван мар, салтаксен шинелĕсем çинче шурă пыйтăсем чупатчĕç. Вунă кун дезинфекцилерĕмĕр. Кайран фронта ячĕç. Орш хулине çитрĕмĕр кăна - нимĕçсем тупăсенчен пеме пуçларĕç. Унта та кунта пуçа çĕклеме май çукла снарядсем çурăлаççĕ. Апла пулин те, пирĕн çыхăну йĕркине çухатма юрамасть. Хырăмпа шуса пăралуксен татăкне шыратпăр, юсатпăр, сыпатпăр. Çапла çыхăну сыпăнтарсах (связной пулса) хамăр фронтпа пĕрле Белоруссине те, Хĕвелтухăç Пруссине те, Польшăна та, Германие те çитсе курмалла пулчĕ. Санитаркăсем çитиччен, вĕсене чĕнсе иличчен аманнă салтаксене те сахал мар пулăшма тÿр килнĕ, сĕтĕрсе те тухнă. Тăван киле вăрçă пĕтсен таврăнтăм.

Таисия Федоровна вăрçăри хастарлăхшăн орден тата чылай медальсем илме тивĕç пулнă. Халĕ акă ун кăкăрĕ çинче «Çĕнтерĕве 60 çул» медаль те ялкăшать.

**Г.НИКОЛАЕВ,**
**Ишлейри ветерансен ертÿçи.**
**✵ Т.Ф.Шорина.**

# ЮРĂ-ТАШĂПА САВĂНТАРЧĔÇ

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи Çĕнтерÿпе вĕçленнĕренпе 60 çул çитнĕ май Çырмапуç ял администраци территорийĕнче пурăнакан ветерансене чысларĕç. Вĕсем пирĕн пиллĕкĕн - Игнатий Васильевич Васильев, Феофан Иванович Иванов, Петр Миронович Миронов, Алексей Павлович Павлов, Антоний Семенович Семенов.

Район администрацийĕн ĕçĕсен управляющийĕ - кадрсем, йĕркелÿпе контроль управленийĕн пуçлăхĕ В.И.Михайлов вăрçă участникĕсене çывхарса килекен уяв ячĕпе саламларĕ, юбилей медалĕсем пачĕ. Вырăнти администраци пуçлăхĕ В.И.Константинов ватăсене ăшă сăмахсем каларĕ. Шкула тата садике çÿрекен ачасем ветерансене юрă-ташăпа хавхалантарчĕç.

**Е.ИВАНОВА.**

# ТĂВАН ТАВРАЛĂХ

## КАЙĂКСЕМ ВĔÇСЕ КИЛЕÇÇĔ

Хĕвел хăйĕн ăшă пайăркисемпе çуркунне пуçланни çинчен пĕлтерет. Кăнтăр енчен кайăксем вĕçсе килеççĕ. Хĕл каçма юлакан кайăксем те, çуркунне çитнине туйса, ытларах юрлама тытăнаççĕ. Уйрăмах кăсăя сасси уççăн илтĕнет. Вăрман тăрăх утса пынă чухне улатакка йывăççене хыттăнах takkanине туятăн. Ăсансен сасси те хăйне евĕр илемлĕ. Пăчăрсем хавасларах вĕçеççĕ.

Ваттисем каланă тăрăх, çуркуннене кăнтăртан вĕçен кайăксем хăйсен çуначĕсем çинче илсе килеççĕ. Чи малтан **хура курак** вĕçсе çитрĕ. Мĕнваскатать-ши ăна? Тен, лайăхрах йăва йышăнма тăрăшать вăл? Хăш-пĕр çул хура курак килнĕ хыççăн та çанталăк сивĕтет. Инçе çултан вĕçсе çитнĕ пулин те, хура кураксем хăйсене çав тери патвар тытаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ хура куракăн хăйĕн уйрăм уяв пур, ăна мĕн ĕлĕкрен мартăн 17-мĕшĕнче «паллă» тунă. Хура кураксем тӳрех кивĕ йăвасене майлама тытăнаççĕ.

Сăнанă тăрăх, кăнтăртан çурçĕр енннелле вĕçсе килме тытăнни кайăксен биологи календарĕпе çыхăннă. Кашни тĕрлĕ вĕçен кайăкăн хăйĕн килес вăхăчĕ. Хăш чух вăл кăшт юлса е маларах çитет.

Çакă та тĕлĕнтерет: пĕр йышши кайăксен пĕр ушкăнĕ кăшт маларах, тепри каярах килет. Кунта та хăйне майлă сăлтав пур: пĕр харăсах ушкăн хăрушлăха лексе пĕтес пулсан, тепри тĕрĕс-тĕкелех сыхланса юлать.

Нихăш çул та **шăнкăрчсем** кураксенчен малтан вĕçсе килмеççĕ, яланах вĕсем хыççăн çитеççĕ. **Вĕлтрентăрри** кайăкĕ шăнкăрч хыççăн çитет.

Вăрмансенче **пилеш кайăкĕ** вырнаçать, çенĕксемпе çуртсем çумне пăрчăкансем иленеççĕ.

Улăхсенче тулли шывпа ишекенсем те вĕçсе килеççĕ. Улăхсенчи кӳлĕсенче каççерен **кайăк кăвакалсем** картлатни инçетрен илтĕнет. Çак вăхăта çутă çуркунне теççĕ.

Апрель вĕçĕнче вĕтĕрех вĕçен кайăксем çитеççĕ. **Шăна кайăкĕ** килет, хушăран вăрманта **куккук** сасси илтĕнет. Куккук хăйĕн вăхăтне çав тери тĕрĕс палăртать, ун хыççăн **чĕкеçсем** килеççĕ.

Май уйăхĕнче вăрмансемпе пахчасенче **шăпчăк** юрри илемлĕ янăрать. **Вĕршĕнсем** те вĕсенчен юлмаççĕ. Унтан вăрманти чи хитре **саркайăк** таврăнать. Çак вăхăтра çĕмĕрт шурă пĕркенчĕкпе витĕнет.



В.ИВАНОВА фото ӳкерчĕкĕ.

Çакă нумайăшне хытă интереслентерет: кайăксем кĕркуннепе çуркунне мĕншĕн-ха темиçе пин çухрăм таран вĕçсе çӳреççĕ? Кăнтăрта пурăнма мĕн кансĕрлет вĕсене? Шыв та çителĕклĕ, ăшă та пур. Апла пулин те тинĕссемпе пушхирсем урлă инçе çула тухаççĕ. Çак вăрттăнлăх çынсене ĕлĕкех тĕлĕнтерные, анчах ыйтăва татса панă теме çук.

Кăнтăрта, пирĕн тавраripe танлаштарсан, аслатиллĕ кунсем вунă хут нумайрах пулаççĕ. Тен, çавăнпа пулĕ, вĕçен кайăксем çав вырăнтан çурçĕр еннелле чĕпĕ кăларма каяççĕ. Çакă та тĕлĕнтерет: чылай йышши вĕçен кайăк пирĕн тăрăхрах хĕл каçма хирĕç мар. Сăлтавне пĕлес тĕлĕшпе ĕçлекенсен йышĕ çулсеренех ӳссе пырать.

Вĕçен кайăксем çут çанталăкри улшăнусем пулса иртнине çав тери туяççĕ. Илер-ха шăпчăка. Вăл лайăх кун пуласси çинчен çĕр каçипех юрă шăрантарса пĕлтерет, çумăра унăн юррине илтеймĕн. Халăхра чĕкеçсем хăйсене сывлăшра мĕнле тытничен çанталăкри улшăнăва малтанах пĕлнĕ. Вĕршĕнсем çумăр пуçланас умĕн çĕр çийĕн вĕçсе иртеççĕ. Типĕ çанталăк вăхăтĕнче вара тӳпене çав тери çӳле хăпараççĕ, тепĕр чухне унтах çĕр каçаççĕ.

Çакна та палăртса хăвармалла. Кайăксен ушкăнĕ пĕлĕтре хăйсене майлă карталанса вĕçни вăйсăррисене ыттисенчен тăрса юласран çăлса хăварать. Шутласа пăхнă тăрăх, карта пуçĕнче вĕçен кайăк кайрипе танлаштарсан 23 процент ытла вăй пĕтерет. Кайăксем вĕçнĕ чухне кайри вырăнсене улăштарсах пыраççĕ.

**В.МОСКОВКИН,**
**Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ лесовочĕ.**

❊ **Кăçал садсемпе парксен çулĕ**

## *РЕКОМЕНДАЦИ УСĂЛЛĂ ПУЛĔ*

**Кăçалхи çула республикăра Парксемпе садсен çулталăкĕ тесе пĕлтернине пĕлетпĕр ĕнтĕ. Йывăç кунне ирттересси пирки те Указ кăларчĕ ЧР Президенчĕ.**

Асăннă Указсене пурнăçа кĕртес тĕллевпе республикăра ятарлă рекомендаци хатĕрленĕ. Унта тавралăха симĕслетмелли, йывăççене лартмалли система пур. Илемлетме усă курмалли йывăçтĕмпе тĕрлĕ ӳсен-тăран ассортиментне, çав шутра йывăç-тĕмпе лианăсем 305 тĕрлĕ, газонта лартса ӳстермелли курăксем 24 тĕрлĕ, тупса вулама пулать. Рекомендацире симĕс фонда епле сыхласа хăварассипе тата ыттипе çыхăннă материал та пур.

Рекомендаци апрелĕн 3-мĕш вунă кунлăхĕнче пин тиражпа кун çути курмалла. Вăл вырăнти самоуправлени органĕсемпе çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх предприятийĕсенчен пуçласа экологсемпе пахчаçăсем, çут çанталăка юратакансем таранах усăллă пулмалла.

## *СУНАРÇĂСЕН УХУТАНА ТУХМА ВĂХĂТ*

2005 çулта çурхи сунар уçасси çинчен. Çакăн пек ятлă приказа нумаях пулмасть алă пуснă Сунар управленийĕн республикăри пуçлăхĕ.

Сунар вăхăчĕ пирĕн районта апрелĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа майăн 2-мĕшĕччен тăсăлĕ. Ку тапхăрта Етĕрне, Элĕк, Вăрнар, Красноармейски, Сĕнтĕрвăрри, Муркаш, Çĕрпӳ тата ытти районта та сунара кайма юрать. Кăнтăр енчи виç районта (Патăрьел, Шăмăршă, Елчĕк) ку вăхăт апрелĕн 16-мĕшĕнче пуçланнă, вăл 25-мĕшĕччен тăсăлĕ.

Сунарçăсен кăвакал аçине (селезень), хуркайăка (гусь), карăк аçине (глухарь), ăсана (тетерев), кăрăлчака (вальдшнеп) тытма ирĕк пур. Анчах кашни кайăка хăй вăхăтĕнче пеме юрать. Кăвакал амисене, калăпăр, ирхи 9 сехетчен тата каçхине 19 сехет хыççăн тĕттĕмлениччен кăна. Пĕр сунар кунĕнче кăрăлчака 3-рен ытла, ăсана пĕрререн ытла, кăвакал аçине 5-рен ытла, хуркайăка 2-рен ытла тытма юрамасть. Карăк аçине вара пĕтĕм сунар тапхăрĕнче те пĕр кайăк тытнипе çырлахма тивĕ.

❊ **Тĕнчере чи-чи...**

### Хăвăрт чупакан

***Страус сехетре 120 километр таран чупма пултарать, 8 метр таран сикеет.***

### Чи сарлака çунатлă

***Çунат сарлакăшпе альбатроса çитекен çук. Çакăн йышши пĕр кайăкăн вăл 3,63 метр таран сарăлать.***

### Пысăк чĕрчун

***Кăвак кит тăршшĕ - 30 метр, виçи - 150 тонна. Унăн «пепки» пысăк слонран тĕреклĕрех, талăкра çур тонна сĕт ĕçет.***

### Мĕн-ши чи çӳлли?

***Жираф иккен! Унăн çӳллĕшĕ - 5 метр таран. Мăйĕпе малти ури вăрăм, чĕлхи тăршшĕ - çур метр таран.***

**«Asio» экологи клубĕн сайчĕн материалĕ тăрăх хатĕрленĕ.**

❊ **Качакассинче**

## *ВĔСЕМ - ПИРĔН ТУССЕМ*

Апрелĕн 9-мĕшĕнче Атайкассинчи вăтам шкулăн филиалĕнче, Качакассинче, кĕçĕн класра вĕренекен ачасем кайăксен кунне паллă турĕç. Пĕчĕк туссене халалласа ачасем ваттисен сăмахĕсене, сăвă каларĕç, юрă юрларĕç. Вĕсем «Кайăксем - пирĕн туссем» стена хаçачĕ те кăларнă, шăнкăрчсем валли вĕллесем ăсталанă. Ольга Александровнăпа Зинаида Васильевна учительницăсем ачасем валли интереслĕ ыйтусем хатĕрленĕ. Пурте хаваспах ответлерĕç вĕсем çине. Уяв хавaслă иртрĕ.

**М.ГРИГОРЬЕВА.**



**Пĕчĕк каччăпа хĕр çурхи пĕрремĕш чечекпе киленеççĕ.**

## *КӲРШĔ КӲРШЕ ЮРАТТĂР*

**Тухăç ăнса пуласси чылай условирен килет. Юнашар епле кӳршĕ пулнипе те çыхăннă вăл. Хăш культура мĕне кăмăллатьха? Ас туса юлар-ха эппин:**

Баклажан пăрçана, фасоле, çĕр улмие юратать, пăрçа - кишĕре, турнепса, йӳç кăшмана, хăяра, кукурузăна, çĕр улмие, фасоле, баклажана; купăста - укропа, сельдерея, сухана, салата, кăшмана, çĕр улмие; çĕр улми - фасоле, пăрçана, кукурузăна, купăстана, укропа, хрена, баклажана, сухана, ыхрана, петрушкăна, кăшмана, салата, йӳç кăшмана, настурцие; кишĕр - пăрçана, сухана, помидора; хăяр - пăрçана, купăстана, салата, укропа, фасоле; помидор - купăстана, сухана, фасоле, йĕплĕ хурлăхана; кăшман - купăстана, салата, сухана, фасоле; ыхра - çĕр улмине, помидора, хурăн çырлине, çĕр çырлине.

❊ **Пахчари ĕçсем**

## ЛАЙĂХ ТУХĂÇ ИЛЕС ТЕСЕН

Тухăçлă пахча-çимĕç туса илес тесен пахчари ĕçсене халĕ çине тăрсах пурнăçламалла. Улма-çырла йывăççисемпе тĕмсене аптăратакан чирсемпе тата сăтăрçăсемпе кĕрешмелле. Ку ĕçе тăкăннă çулçăна пуçтарнинчен пуçăнмалла. Ăна е компост тума пухма пулать, е çунтарса ямалла. Хуçăк, чирлĕ е ытлашши нумайланса кайнă туратсене папка кӳпчесе кайиччен иртмелле. Йывăççен суранланнă вырăнĕсене тасатса пăхăр купоросĕн растворĕпе (ăна валли 10 литр шыв пуçне 300 грамм илмелле) дезинфекцилемелле. Пăхăр купоросĕ пулмасан марганцовка та юрать. Ытлашши нумай яма кирлĕ мар. Шĕвекпе сĕрнĕ хыççăн типсе илтĕр, кайран пахча сăмалипе е пĕр тан виçепе илнĕ тăмпа ĕне каяшне хутăштарса сĕрсе хумалла. Турата кивĕ татăкпа çыхса лартăр.

Йывăççем тавралли тăпрана мочевина (10-12 литр шыв валли 70 грамм) сапса тухăр, тĕп туратсене тата вату вулăна шуратма ан ӳркенĕр. Ун валли 2 килограмм известь, 300 грамм пăхăр купоросĕ илсе 10 литр шывра ирĕлтермелле.

Ватă улмуççисене 1-3 çулта пĕрре тимĕр купоросĕпе сапмалла. Ку препарат 10 литр шыв валли çур килограмм кирлĕ. Тимĕр купоросĕ кăмпа чирĕнчен лайăх. Улмуççие çуркунне нитрафенпа (10 литр шыва 300 грамм) сапни хĕл каçакан хуртсенчен, курăк пыйтинчен, çимĕç шатринчен тата çĕрессинчен пулăшать. Нитрафен пулмасан бордос шĕвекĕ те аван (10 литр шывра 400 грамм известь тата 300 грамм пăхăр купоросĕ ирĕлтермелле). Извеçе пĕр талăк маларах кăштах шывпа хутăштармалла. Йывăç савăтра 5 литр шывра пăхăр купоросне пăтратмалла. Çунтарнă извеçе - уйрăм савăтра. Пăхăр купоросĕн шывĕ çине известь шывне йывăç хатĕрпе пăтратнăçемĕн пĕчĕкшерĕн ямалла. Хутăшпа тунă кунах усă курмалла.

Çамрăк мар йывăççене е мочевинăпа (10 литр шыва 700 грамм кирлĕ), е аммиак селитрипе (ăна 10 литр шыв пуçне 1 килограмм илмелле), е аммони сульфачĕпе (1,5 килограмм), е хлорлă калипе (700 грамм) апатлантармалла.

Папка сарăлма пуçланă вăхăтра улма-çырла йывăççисене бордос шĕвекĕпе тепĕр хут, 10 литр шĕвек çине 15-20 грамм децис е цитор хушса сапсан аван.

❊ **Конкурс**

## «ХВАТТЕР ЫЙТĂВĔ»

«Asio» экологи клубĕ тĕрлĕ конкурс тăтăшах ирттерет. Çавсенчен пĕри - «Хваттер ыйтăвĕ». Чăнах та, ку ыйту çынсемшĕн кăна мар, кайăксемшĕн те çивĕч. Çунатлă туссенчен чылайăшĕ



В.ИВАНОВА фото ӳкерчĕкĕ.

хăех йăва çавăраять, анчах теприсем пирĕн пулăшăва кĕтеççĕ. Кайăксем валли çурт çĕклеме нумаях та кирлĕ мар: темиçе хăма татăкĕ, пăта, тĕрлĕ инструмент. Хăвăр вăйăра шанмасан аслисенчен пулăшу ыйтма пулать.

«Хваттер ыйтăвĕ» конкурс «Asio» экологи клубĕн участникĕсен хушшинче иртет. Ку ăмăртура эсир хăвăрăн дизайнер пултарулăхне кăтартса парайăр.

**Страницăна В.ИВАНОВА хатĕрленĕ.**

✿ Культура

# 60 ТАТА 70 ÇУЛСЕМ

**Районти культура управленийĕн 60 çулхи, культура çурчĕн 70 çулхи юбилейĕсем çинчен пĕлтернĕччĕ. Эрне кун çавна май Кӳкеçри культура çуртне халăх йышлă пухăнчĕ.**

Уява районти культура, çамрăксен ĕçĕпе тата спорт енĕпе ĕçлекен управлени пуçлăхĕ М.Павлова уçрĕ, культура вучахĕ мĕнле пуçланса кайни, ура çине тăни, хальхи лару-тăру, малашлăхри тĕллевсем çинчен каларĕ. Сцена çине малтанхи культура управленийĕн ертӳçисене - П.Николаева, Ф.Аврамова, Л.Фомина, вăрçă вут-çулăмĕ витĕр тухса чылай çул Хыркассинчи библиотекăра вăй хунă А.Андриянова чĕнсе хисеп турĕ.

«Хăйсен професси уявĕ, юбилей кунĕнче те культура ĕçченĕсем ларма-тăма пĕлмесĕр ĕçлеççĕ, халăха савăнтараççĕ, юрă-ташăпа чуна тыткăнлаççĕ. Вĕсенчен çĕнĕрен те çĕнĕ вăй тапса тăнине туятăн»,- терĕ район администрацийĕн ертӳçи А.Князев уяв ячĕпе саламласа.

Пирĕн культура тытăмĕнче хăйĕн ĕçне чунтан парăннă çынсем вăй хуни район культурине малалла аталанма çирĕп шанăç çуратать. Культура ĕçченĕсем - район тĕкĕрĕ тесен те йăнăш пулмĕ. Юлашки çулсенче района тата илĕртӳллĕрех тăвассипе пысăк калăпăшлă ĕçсем туса ирттерчĕç, авалхи историлле палăксене, вырăнсене, йăла-йĕркесене чĕртессипе тимлерĕç, модельлĕ библиотекăсем, тĕрлĕ профильлĕ центрсем, клуб-музейсем хута кайрĕç. Çитĕнӳ, паллах, ĕçе епле йĕркелесе пынинчен те сахал мар килет. Кунта М.Павлован тӳпи пысăк. Район администрацийĕн ертӳçи А.Князев культура ыйтăвĕсене кайри рете хăварманни çĕнĕ вăй кĕртет.

Уяв ячĕпе саламлама ЧР Культура, национальноçсен ĕçĕсен, информаци политикин тата архив ĕçĕсен министерствин представителĕсем, ЧР Патшалăх Канашĕн аппарачĕн ертӳçи А.Иванов, кӳршĕ районсенчи культура управленийĕн ертӳçисем тата ытти сумлă хăнасем чылайăн килчĕç. Хăйсен ĕçĕнче палăрнисене республикăн, районăн Хисеп грамотисемпе чысларĕç. Культура сферинче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнисене пурне те чĕрĕ чечек, асăнмалăх парнесем пачĕç.

Чăваш эстрадинче сумлă ят илнĕ А.Васильев та хăйĕн ентешĕсене, ĕçтешĕсене саламласа юрă парнелерĕ. Сцена çине культура çурчĕ çумĕнчи художество пултарулăх ушкăнĕсем, шкул ачисем тухрĕç.

Юлашкинчен районтан пухăннă клуб ĕçченĕсен, библиотекăра вăй хуракансен, ӳнер шкулĕнчи вĕрентекенсен ушкăнĕсем Аслă Çĕнтерĕве 60 çул çитнине халалласа вăрçă тематикипе тăвакă конкурсран тăракан КВН кăтартрĕç. Унта вара клуб ĕçченĕсене çитекенни пулмарĕ.

**И.ВАСИЛЬЕВА.**

✿ Кĕске шӳт

## ЙĂЛА-ЙĔРКЕ ПĔР МАР

***Парижра нумай хутлă çурт чӳречинчен арçын ӳкнĕ. Инкек вырăнне вырăс посольствин ĕçченĕсем çитнĕ, мĕншĕн тесен арçын вырăс пулнă. Полици те пынă, инкек сăлтавĕпе кăсăкланать.***

***Хваттер хуçи - чипер хĕрарăм - ăнлантарать:***

***- Унпа эпир самолетра паллашрăмăр. Хамăр йăлапа эпĕ пĕр кĕленче коньяк тата çыртмалли туянтăм. Вăл хăйсен йăли-йĕркипе пĕр кĕленче водка тата селедка илчĕ. Эпĕ хамăр йăлапа коньяк ас тивсе патăм, вăл, хăйсен патĕнчи пекех, водкăна пушатрĕ, селедкăна çисе ячĕ. Кайран эпĕ хамăр йăлапа вырăн сарма кайрăм. Вăл çав вăхăтра хăйсен патĕнчи йăла-йĕркене пăхăнса ман коньяка ĕçсе яма ĕлкĕрнĕ. Унтан манăн упăшка килсе кĕчĕ. Эпĕ хамăр йăлапа вĕсене паллаштарас терĕм. Вăл хăйсен патĕнчи пек турĕ: чӳречерен сикрĕ...***

✿ Криминал

## ВИÇĔ АЧИ ЮЛНĂ

Янашкасси ялĕ çумĕнчи икĕ хутлă общежити районти чи криминаллă вырăнсенчен пĕри. Çак çурма ишĕлнĕ икĕ хутлă çуртра пурăнма та май çук. Кунти тасамарлăхпа йĕркесĕрлĕхе çырса кăтартма та йывăр. Пӳлĕмĕсенче пурăнакансем те темĕнле урăх тĕнчерен килнĕ çынсем евĕр. Нумайăшĕ ниçта та ĕçлемест, унта-кунта пуçтарса çӳренипе тăранса пурăнаççĕ. Ачисем те çаплах, вĕренесшĕн мар. Таса ăс-тăна çухатнă пуççем, хаяр шĕвекпе чӳхенсе çапăçса харкашнисĕр пуçне урăх нимĕн тума та пултараймаççĕ. Çакă вара яланах криминал çуратать.

Апрелĕн 18-мĕшĕнче, ирхине ултă сехетре 1956 çулта çуралнă С.Т.Антонов пĕрле пурăннă хĕрарăмне, Т.И.Кузьминана чĕринчен çĕçĕпе чиксе вĕлернĕ. Иккĕшĕ те ĕçлемен. Хуларан илсе тухса пăрахакан çуп-çап куписем çинчен тупнă япаласем сутса, çисе тăранса пурăннă. Т.И.Кузьминан виçĕ ачи юлнă.

**П.ЧАШМА.**

✿ Пĕр тăрăхри хыпарсем

## ИШЛЕЙРЕ - ШАХМАТ ТУРНИРĔ

**Ăçта-ăçта-та, Ишлей тăрăхĕнче шахмат ăстисем нумайăн. У.В. Петрова ятне районта кăна мар, республика шайĕнче те аван пĕлеççĕ. Пысăк вольтлă аппаратура заводĕнче ĕçлекен А.М.Александров миçе хут район ятне çӳле çĕклемен пуль. Ишлей зонине чапа кăларнă тепĕр çын вăл - Н.И.Миронов.**

Николай Иванович мĕн пенсие тухиччĕнех Ишлейри пысăк вольтлă аппаратура заводĕнче вăй хунă. Шашка-шахматла выляс туртăм вара унăн шкул çулĕнченех пынă. Çак спорт вăййин вăрттăнлăхне алла илнĕскер, темиçе хут та чемпион ятне çĕнсе илнĕ. Шел пулин те, 1996 çулта Ишлейсем унпа ĕмĕрлĕхех сывпуллашаççĕ. Апла пулин те, Николай Иванович яланах вĕсен асĕнче. Нумай турнира хутшăнса призерсен шутне кĕнĕ Н.И.Миронов ячĕпе кунта кашни çулах шахмат турнирĕ ирттереççĕ. Кăçалхи апрелĕн 16-мĕшĕнчи шучĕпе 9-мĕш пулчĕ. Ăна та Ишлей ял администрацийĕ йĕркеленĕ.



«Пĕтĕмпе 17 çын ку енĕпе тупăшма кăмăл турĕ. Вĕсен хушшинче - пенси çулĕпе утакан-ран пуçласа шкул енне сукмак такăрлатакан таранах. Акă, аслă ăрури Ю.М.Перлов кашни çулах турнира хутшăнать. Вăл пĕрре мар асăннă турнир чемпионĕ пулнă. Лапсартан, Шупашкартан, Кăшавăшран хăнасем, паллах, ИЗВАпа вырăнти шкултан, кирпĕч заводĕнчен участниксем пулчĕç. Чи кĕçĕн шахматçă Сергей Будыгин шкулта çеç вĕренет-ха. Хăй тата нумайрах тăрăшсан, тен унăн ятне малашне чемпионсен хушшинче курăпăр.

Ытти çулсенче хĕрсем те нумайăн хутшăнаканччĕ. Шел, кăçал Анастасия Вахтеркинăна çеç курма тӳр килчĕ»,- пĕлтерчĕ Ишлей ял администраци пуçлăхĕ Я.В.Кушев.

Асăннă турнирта тăвату хутчен кубок çĕнсе илнĕ А.М.Александров судья пулчĕ. Вăййа хутшăнакансем кубока çĕнсе илессишĕн хĕрӳ тупăшрĕç. Умлă-хыçлă «шах», «мат» лартса 6 очко пухса Кăшавăш шкулĕн вĕрентекенĕ А.В.Белов чемпион пулса тăчĕ. Ăмăрту судйи А.М.Александров хальхинче иккĕмĕш вырăна тухрĕ. 2002 çулта кубок çĕнсе илнĕ Лапсарти Ю.М.Петухов кăçал виççĕмĕш, Ю.М.Перлов вара тăваттăмĕш вырăнсемпе çырлахрĕç. Çĕнтерӳçĕсем пурте Ишлей ял администрацийĕн парнисене тивĕçрĕç.

**А.СУСМЕТ.**

✿ **Сулахайри - çĕнтерӳçĕ А.Белов.**

✿ Халăх медицини

## ЧĔРНЕ КĂМПИНЕ ПĔТЕРЕТПĔР

***Тепĕр çынсем ура чĕрнине кăмпа сиенлетнипе аптăраççĕ. Кăмпана пĕтерме пан улми уксусĕ пулăшать. Урана çăвăр та пан улми уксусĕпе йĕпетнĕ ватăна чирлĕ чĕрне çине хурăр. Целлофанпа чĕркесе бинтпа çыхса лартăр, унтан нуски тăхăнăр. 11-12 сехет тытнă хыççăн компреса илсе пан улми уксусĕпе тасатăр. Çĕнĕ чĕрне тухиччĕнех эрнере пĕрре çапла тăвăр.***

## «ПУЗИКИ» - ПĔРРЕМĔШ

Курак Чурачăкри культура çурчĕ шăмат кун кĕрлесе тăчĕ. Ташă, юрă, кулă - чăннипех кану кунĕ пулчĕ ял халăхĕшĕн. Тамара Маркитанова клуб заведующийĕ ертсе пынипе хаваслисемпе тавçăруллисен клубĕсем тупăшăва пуçтарăннă-çке. Ял халăхĕ виçĕ команда - «О-бана», «КМТС», «Пузики» - пултарулăхне курса савăнчĕ. Мĕн кăна тума пĕлмелле мар-ха хаваслисен: тĕрлĕ хускану та темăпа пĕр килмелле, панă ыйту çине те ыттисенчен хăвăртрах хуравламалла, шӳчĕ те вырăнлă пулмалла. «Пузики», шкул ачисенчен йĕркеленнĕ «КМТС» финала тухиччĕнех пĕрешкел пычĕç. Пĕтĕмпе командăсем 7 конкурс витĕр тухрĕç. Юлашки вăйăра «Пузики» вĕренекенсенчен пултаруллăрах пулнине палăртрĕ жюри. «КМТСпа» «О-бана» 2-мĕшпе 3-мĕш вырăна пайларĕç»,- пĕлтерчĕ ял админмистраци пуçлăхĕ Я.В.Кушев.

**А.ПЕТРОВА.**

# ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ *2-13-80*

Управление образования администрации Чебоксарского района сообщает об итогах конкурсов 1 апреля 2005 года:

- на выполнение подрядных работ - капитальных и текущих ремонтов, установку пожарной сигнализации, установку газосчетчиков в образовательных учреждениях Чебоксарского района;

- на приобретение школьной мебели.

Признали победителями конкурса:

- на выполнение капитальных - текущих ремонтов: ИП Куварзин Е.М., ООО «Стромтранс», ООО «СТЭП», ООО «ЖКХ», ООО «Сельский комфорт», ООО «Маяк»;

- на установку пожарной сигнализации: ООО «Пожсервис», ООО «ТОГЕС», ЧР ООО «ВДПО», ИП Шачков Ю.И., ООО «Электростроймонтажхолдинг»;

- на поставку школьной мебели ГУП ЧР «Чувашский республиканский коллектор учебно-наглядных пособий Министерства образования Чувашский Республики»;

- на установку газосчетчиков конкурс не состоялся.

Конкурсная комиссия по размещению заказов на поставку продукции и выполнения работ для муниципальных нужд Чебоксарского района сообщает: 12 апреля 2005 г. состоялся конкурс по отбору строительных организаций на выполнение подрядных работ по строительству муниципального жилья для граждан, нуждающихся в улучшении жилищных условий, по программе строительства социального жилья 2005 года, с обязательным вводом в эксплуатацию в 2005 году.

Конкурсная комиссия признала победителем подрядную организацию ООО «Конкорд Плюс».

Конкурсная комиссия по размещению заказов на поставку продукции и выполнения работ для муниципальных нужд Чебоксарского района сообщает: 8 апреля 2005 г. состоялся конкурс для определения кредитной организации, для открытия единых блокированных персонифицированных счетов для предоставления безвозмездной субсидии на строительство или приобретение жилья гражданам, нуждающимся в улучшении жилищных условий.

Конкурсная комиссия признала победителем Чебоксарское отделение № 4472 Сбербанка России.

**Синьяльская сельская администрация** ***объявляет открытый конкурс*** по отбору подрядчиков на:

Лот №1. Текущий ремонт водонапорной башни БР-15 в селе Синьялы.

Лот №2. Текущий ремонт артезианских скважин (3 шт.) и установка водозаборных колонок (3 шт.) в селе Синьялы.

Лот №3. Устройство и установка изгороди вокруг кладбища д. Шанары длиной 500 метров.

Лот №4. Текущий ремонт здания сельской администрации.

Торги состоятся в зале заседания администрации Чебоксарского района 6 июня 2005 года в 10.00 часов. Заявки для участия в конкурсах принимаются до 17 часов 3 июня 2005 года в Синьяльской сельской администрации Чебоксарского района по адресу: **с. Синьялы, ул. Центральная, д. 34.** ***Справки по тел.: 57-2-24.***

***Конкурсная комиссия.***

**РГОУ «Кугесьская школа-интернат основного общего образования» Минобразования Чувашии** ***объявляет открытый конкурс*** по отбору строительной организации на выполнение подрядных работ по замене мягкой кровли на чердачную и ремонту спортзала.

Ознакомление с условиями конкурса, характеристиками объектов, прием заявок по адресу: **Чувашская Республика, пос.Кугеси, ул.Шоршелская, д.5.**

Конкурс проводится 6 июня 2005 года в 10 час. Победитель конкурса - организация, предложившая наименьшую сметную стоимость. Конкурсные заявки подаются в установленной форме и принимаются до 17 час. 4 июня 2005 года.

В объявлении о выделении земельной доли из земель СХПК «Атăл» в газете «Тăван Ен» от 22 марта 2005 года вместо «Собственники земельной доли С.О.Сергеев, Л.В.Сергеева сообщают» читать «Собственники земельной доли О.Г.Сергеев, Л.В.Сергеева, Л.Г.Лебедев, Р.П.Кудряшова - 2 доли сообщают».

Продаю срубы-доски. Тел.: 2-23-28.

Утерянные страховым отделом в п. Кугеси филиала «РГС - Поволжье» квитанции Ф 7 а №286031, 286035, 286037-286050 считать недействительными.

✿ ✿ ✿

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» выражает глубокое соболезнование Николаю Викторовичу Кабанову, главному врачу Атлашевской участковой больницы МУЗ «Чебоксарская ЦРБ» в связи со смертью

**МАТЕРИ.**

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» глубоко скорбит по поводу безвременной кончины фельдшера-лаборанта ФГУ ЦГСЭН в Чебоксарском районе

**Елены Апполоновны**

**МЕДЯКОВОЙ**

и выражает искреннее соболезнование родным и близким.

Продаю шифер, цемент, рубероид, мох, керамблок, оцинковка с доставкой и без выходных ( Ишлеи). Т.: 3-15-85.

ООО *«Интер -Термогаз - МРК»* произведет химпромывку и гидропневмопромывку систем теплоснабжения по низким ценам. Т.: 2-16-51.

ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
ГУП “Кугесьский издательский дом”,
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики

Газета зарегистрирована в Приволжском окружном межрегиональном территориальном управлении МПТР РФ 17 декабря 2002 г. ПИ №18-1109

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, ответственный секретарь, фотокорреспондент - 2-13-80, отдел сельского хозяйства - 2-21-88, компьютерный отдел - 2-12-59, отдел писем - 2-21-88, бухгалтерия - 2-12-66. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер набран, сверстан и отпечатан в ГУП “КуИД”. Тел.Ёфакс: (8240) 2-13-83. E-mail: prinĕ@chebs.cap.ru

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: А.А.ПЕТРОВА.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 19.04.2005 г. в 16 час. 00 мин.
Заказ № 546 . Тираж 1546.
Индекс газеты - 54820.